47-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
31
ВЫРСАРНИКУН
256(6751) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН
ХАÇАЧӖ

Çӗнӗ султи çӗнӗ çӗнтерӳсемшӗн!

Ырӑн пирӗн социализмлӑ аслӑ çӗршыв ӗççыннисем çӗнӗ, 1945 çула кӗтсе илеççӗ. Иртнӗ çулта кӗрешӳре çӗре тунӑ чаплӑ çӗнтерӳсене паллӑ тӑваççӗ, хӑйсен çӗнӗ çулхи çӗнӗ ӗмӗчӗсене палӑртса хураççӗ.

Пирӗн иртнӗ çулта тунӑ çӗнтерӳсем те, малашнехи ӗмӗтсем те аслӑ. 1944 çулта пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Çар историллӗ миссийӗн пӗрремӗш пайне пурнӑçа кӗртрӗ. Вӑл хамӑрӑн Тӑван çӗршыва фашистла захватчиксенчен тасатса çитерчӗ. Халӗ ӗнтӗ пирӗн Хӗрлӗ Çар Верховнӑй Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ ертсе пынипе юлашки миссие пурнӑçа кӗртсе пырать. Героиллӗ совет çарӗсем, пирӗн союзниксен çарӗсемпе пӗрле тӑрса, фашистла нимӗç çарне пусӑрсе çӗмӗрсе тӑкассишӗн, фашистла тискер кайӑка хӑйӗн шӑтӑкӗнчех çапса пӗтерсе, Берлин çине çӗнтерӳ ялавне çӗклесе лартассишӗн кӗрешеççӗ.

Иртнӗ çулталӑк хушшинче нимӗçсене Днепр шывӗн сылтӑм енчи Украинӑран, Крымран, Белоруссирен, Эстонирен, Литварен, Латвирен, Молдаврен, Карел-Финн республикинчен хӑваласа кӑларнӑ. Нимӗç оккупанчӗсем Европӑри çӗршывсен 17 столицинчен 10-шне, хӑйсен 4 союзникӗнчен 3-шне çухатрӗç. Румыни, Финлянди, Болгари хӑйсем фашистла Германипе тытса тӑнӑ çыхӑнусене татрӗç кӑна мар, нимӗç оккупанчӗсене хирӗç хӑйсен хӗçпӑшалӗсене çӗклерӗç. Хӗрлӗ Çар нимӗçсен юлашки тарçин—Венгрин столицине Будапешт хулине, нимӗçсемпе венгерсен унти пысӑк çар ушкӑнӗсемпе пӗрлех, çавӑрса илчӗ те халӗ вӗсене пӗтерсе тӑкассишӗн кӗрешет. Çапла, Днепр патӗнчен пуçласа—Дунай шывӗ урлӑ—Будапешт патне çитиччен, Ленинград патӗнчен пуçласа Хӗвелтухӑç Пруссири нимӗç фашисчӗсен йӑвисем патне çитиччен çутӑлса выртать пирӗн Хӗрлӗ Çарӑн иртнӗ çулталӑкри аслӑ çӗнтерӗвӗсен çулӗ.

Хӗрлӗ Çар тӑшмана çавӑн пек паттӑррӑн аркатса пынине пула, пирӗн союзниксем—Англипе Америка иртнӗ çулӑн варринче Европа континенчӗ çине хӑйсен çарӗсене антарчӗç те хӑватлӑ наступлени туса пычӗç. Германи территорийӗ çине кӗрсе кайрӗç. Нимӗç оккупанчӗсенчен ирӗке тухнӑ Франци çӗршывӗ, Пӗрлешнӗ Нацисен ретне тӑрса, фашистла Германие хирӗç кӗрешме тытӑнчӗ. Çапла, иртнӗ çулталӑк хушшинче гитлерла Германие хирӗçле союз татах та ытларах çирӗпленчӗ.

1944 çулӑн мӗнпур тӑршшӗнче хӑватлӑ наступлени туса пырса, Хӗрлӗ Çар нимӗç çарӗсен пысӑк ушкӑнӗсене нумай вырӑнсенче çавӑра-çавӑра илсе пӗтерсе тӑкрӗ. Нимӗçсем иртнӗ çул хӑйсен çав тери нумай çар техникине, генералӗсемпе офицерӗсен тата салтакӗсен пысӑк йышне çухатрӗç. Хӗрлӗ Çар иртнӗ çулта татти-сыпмисӗр, нӗр чарӑнмасӑр, хӑватлӑнрах та хӑватлӑнрах наступлени туса пыни пек наступленине вӑрçӑсен историйӗ халиччен курман.

Çак аслӑ çӗнтерӳсене тунӑ çӗре пирӗн чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем те, тӑванла ытти халӑхсен ывӑлӗсемпе пӗрлех, хӑйсен улӑпла вайӗсене хучӗç. Совет Союзӗн Геройӗсем пулса тӑнӑ паттӑр земляксен йышӗ 27 çынна çити ӳсрӗ. Пиншер паттӑрсен çӗнӗ йышне Совет Правительстви чаплӑ орденсемпе тата медальсемпе наградӑласа пачӗ.

Аçтан тапса тӑрать-ха çак аслӑ паттӑрлӑхӑн ихсӗлми çӑлкуçӗ? Çак ыйту çине чӑваш çынни, гварди сержанчӗ Иван Кудряшов, вӑрçӑччен шахтер пулса ӗçленӗскер, халӗ танксене хирӗç кӗрешекен орудие командирӗ пулса тӑраканскер, Сталин юлташ ячӗпе Хӗрлӗ Çар Политуправленийӗ янӑ çырура питӗ витӗмлӗ ответ панӑ. Вӑл çырӑва генерал-майор Пигурнов «Красная Звезда» хаçатӑн декабрӗн 24-мӗшӗнчи номерӗнче тухнӑ статьяра илсе кӑтартнӑ. Акӑ мӗн çырать Кудряшов юлташ:

«Сана, тӑван аттемӗр, эпӗ ирсӗр нимӗçсене хирӗç епле çапӑçни çинчен çырса пӗлтерессишӗн. Эпӗ—чӑваш. Пирӗн чӑваш халӑхӗ ӗлӗк, патша вӑхӑтӗнче, чухӑн, тӗттӗм халӑх пулнӑ. Помещиксем ун чухне чӑваша этем вырӑнне мар, йытӑ вырӑнне çеç шутланӑ. Ленин юлташ тата эсӗ, пирӗн аттемӗр, помещиксен патшине пӗтерме пулӑшрӑр. Чӑвашсем те вара этем шутне кӗме тивӗçлӗ пулчӗç: эпӗ колхозник пулса тӑтӑм, каярахпа Донбаса кайса, кӑмрӑк касакан машинист пулса ӗçлерӗм. Эпир аван пурӑнма пуçланӑччӗ. Анчах пирӗн çине ирсӗр нимӗç килсе тапӑнчӗ, вӗлерме, çаратма пуçларӗ, совет çӗрне аркатма тытӑнчӗ. Июнӗн 22-мӗшӗнче эпӗ шахтӑри юлташсене çапла каларӑм: «Татах йытӑ пурнӑçне пурӑнмалла пуласси килмест, нимӗçсене вӗлерме, совет влаçне хӳтӗлеме каятӑп», терӗм. Эпӗ фронта тухса кайнӑранпа ... Çар нимӗçсене кая мар тӗрмерӗмӗр. Хам тупӑран тӳрремӗнех тивертсе нимӗçсен 2 танкне, 20 автомашинине аркатса тӑкрӑм, нумай миномётсемпе пулемётсене пӗтертӗм. Манӑн Николай ятлӑ ывӑлӑм та нимӗçсене хам пекех çӗмӗрет. Вӑл—лейтенант пулнӑ, танксене хирӗç кӗрешекен ротӑна ертсе пынӑ... Вӑл Ленинград патӗнче вилчӗ. Ывӑл вилни çинчен пӗлсен, манӑн чӗрем чул пек хытса ларчӗ. Эпӗ нимӗçсене çав тери кураймасла пулса çитрӗм, вӗсене эпӗ пӗр чарӑнмасӑр татӑлма тупа турӑм. Мана 9 хут амантрӗç. Халӗ эпӗ каллех стройра, хамӑн тупӑ патӗнче. Тӑшмана каллех пӗр шеллемесӗр, пӗтӗм вӑй çитнӗ таран çӗмӗрме пулатӑп. Чӗре тапни пуличчен нимӗçсене хаяррӑн пӗтерсе пыма сан умӑнта, тӑван аттемӗр, тупа тӑватӑп. Вӑрçӑра эпӗ коммунист пулса тӑтӑм. Хамӑрӑн совет чӑнлӑхӗшӗн, партишӗн, санщӑн, аттемӗр, эпӗ пӗтӗм юнӑмпа пурлӑçӑма пама хатӗр».

Совет чӑнлӑхӗшӗн, партишӗн, тӑван Сталиншӑн! Вӗсем пире ирӗклӗхпе чыслӑх, никам çӗнтерейми хӑват пачӗç. Çакӑнта ӗнтӗ совет халӑхӗн вӑй-хӑвачӗн иксӗлми çӑлкуçӗ. Çакӑн пек шухӑшлать, ӗçлет, кӗрешет паян кашни совет çынни, пӗтӗм совет халӑхӗ.

«Хӗрлӗ Çар, фашистла çарсене хирӗç нумай вӑхӑт хушши пӗччен йывӑррӑн кӗрешсе пырса, вӑрçӑ тӗлӗшӗнчен çӗнтерӳ тунӑ пекех, совет тылӗнчи ӗççыннисем те, гитлерла Германипе тата унпа пӗр каварлисемпе пӗччен кӗрешсе пырса, тӑшмана экономика тӗлӗшӗнчен çӗнтерчӗç». (Сталин).

Пирӗн республикӑри ӗççыннисем те, пӗтӗм çӗршыври ӗççыннисем пекех, ӗç фронтӗнче иртнӗ çулталӑкра пысӑк çӗнтерӳсем турӗç, фронтпа çӗршыва хӑватлӑн пулӑшса тӑчӗç. Республикӑри чи пысӑк та паха предприятисем — Котов, Слуцкий, Якушин юлташсем главнӑй инженер пулса ӗçлекен заводсем тата ытти чылайӗшӗсем производство программисене уйӑхран уйӑха, кварталтан квартала тултарса пычӗç, çулталӑкри плана та срокчен 20—30 кун маларах тултарчӗç, ӗç тухӑçлӑхне, продукци хисепӗпе пахалӑхне иртнӗ çулхисенчен нумай хут ӳстерчӗç.

Республикӑри колхозсем, 1941 çулта унччен çулсенчен вӑйлӑрах тырпул туса илсе, ӑна вӑхӑтра пухса кӗртрӗç, Хӗрлӗ Çарпа çӗршыва апат-çимӗç, промышленноçа— чӗртавар хакличчен чылай нумайрах пачӗç. Çӗрпӳ районӗнчи колхозниксем пуçарнипе халӗ патриотла çӗнӗ юхӑм сарӑлса пырать. Колхозниксемпе колхозницӑсем çӗнтерӳ туса пыракан Хӗрлӗ Çар фондне çӗнӗрен 300 пин пӑт тырӑ пама пулчӗç, хӑйсен сӑмахне вӗсем чыслӑн пурнӑçа кӗртсе пыраççӗ.

Республикӑри интеллигенци — ученӑйсемпе врачсем, инженерсемпе техниксем, учительсемпе агрономсем, писательсемпе художниксем, артистсемпе композиторсем, формипе нациллӗ, ӑшчикӗпе социализмлӑ культурӑна, производство техникине малалла аталантарассишӗн вӑя хӗрхенмесӗр ӗçлесе, иртнӗ çулталӑк хушшинче çӗнӗ çитӗнӳсем турӗç.

Малашнехи ӗмӗтсем пирӗн татах та пысӑкрах. Ирсӗр тӑшмана хӑйӗн йӑвинчех çапса вӗлерсе, Берлин çине хӑвӑртрах çӗнтерӳ ялавӗ çӗклесе лартас тесе, эпир, Чӑваш республикинчи ӗççыннисем, çӗнӗ, 1945 çула кӗнӗ май, Тӑван çӗршыв умӗнче, фронтри паттӑрсем умӗнче, пире çӗнтерӳ патне ертсе пыракан аслӑ Сталин умӗнче çапла тупа тума тивӗçлӗ:

Çӗнӗ çулта эпир ӗç фронтӗнче çӗнӗ, татах та пысӑкрах çитӗнӳсем тӑвӑпӑр, фабрикӑсемпе заводсенче ӗç тухӑçлӑхне, продукци хисепӗпе пахалӑхне çӗнӗрен вӑйлӑн ӳстерӗпӗр, колхоз уйхирӗсенче кашни гек тартан 100—150 пӑт тӗштырӑ туса илессишӗн, йышлӑ та паха выльӑх-чӗрлӗхшӗн, фронтпа çӗршыва апат-çимӗç парса тӑрассишӗн, нациллӗ совет культурине малалла ӳстерсе пырассишӗн татах та вӑйлӑнрах ӗçлӗпӗр.

Орденлӑ республикӑн чысне халиччен пекех çӳлте тытса пырӑпӑр, хамӑрӑн паттӑр ывӑлсем фронтран çӗнтерӳпе таврӑнсан, пире: маттур ӗçленӗ эсир!—тесе калччӑр.

Çӗнӗ çул ячӗпе çӗнӗ çӗнтерӳсем тума ырӑ сунатпӑр, юлташсем!

Ӳкерчӗк çинче: Совет Союзӗн Геройӗ гварди старши лейтенанчӗ Евдокия Борисовна Пасько. Вӑрçӑччен вӑл Мускаври Ломоносов ячӗпе тӑракан университетӑн механикӑпа математика факультетӗнче вӗреннӗ.

В. М. Молотов Чехословаки республикин представителӗсене йышӑнни

Декабрӗн 27-мӗшӗнче СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Чехословаки Правительствин Чехословакин ирӗке кӑларнӑ территорийӗнчи Уполномоченнӑйне Ф. Немец господина, Правительство делегацийӗн членӗсене И. Валопа И. Петрущак господинсене тата Словакин Наци Совечӗн членӗсене Я. Урсиня, М. Весел, Л. Новомесский господинсене йышӑннӑ.

Йышӑнура СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский тата Чехословакин СССР-ти Посолӗ З. Фирлингер господин пулнӑ.

В. М. Молотов Болгари правительствин представительне Д. Михалчев господина йышӑнни

Декабрӗн 29-мӗшӗнче СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Болгари правительствин Совет Союзӗнчи представительне Д. Михалчев господина йышӑннӑ.

ВЦСПС-па СССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариатӗнче

ВЦСПС-па СССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗ, МТС-сен МТМ-сен тата ремзаводсен 1944 çулхи ноябрь уйӑхӗнчи тракторсем юсамалли плана пӗтӗмпех тата иртттерсе тултарассишӗн пынӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, ӑмӑртура мала тухнӑ Йӗпреç МТС-не (директорӗ Г. Иванов юлташ) ВЦСПС-па СССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата укçан преми пама йышӑннӑ.

Хӗрлӗ Ялавлӑ МТС-ра

ЙӖПРЕÇ, декабрӗн 30-мӗшӗ. (Телефонпа). МТС тӑваттӑмӗш кварталта 15 трактор юсас вырӑнне паянхи кун тӗлне 24 трактор юсанӑ. Кунта уйрӑмӑнах Яковлев юлташ ертсе пыракан бригада пысӑк çитӗнӳ тунӑ. Декабрӗн 25-мӗшӗ тӗлне çак бригада 4 трактор юсаса пӗтернӗ, вӗсенчен пӗри—гусеницӑллӑ трактор. Бригада çумне çирӗплетнӗ 2 сеялкӑна, 2 культиватора, 4 трактор плугне тата 2 лущильнике те юсаса лартнӑ. Халӗ Яковлев юлташӑн бригади тракторсене юсас ӗçре 7-мӗш бригадӑна пулӑшать. Яковлев юлташ ертсе пыракан трактор бригади иртнӗ ялхуçалӑх çулне те ӳсӗçлӗн вӗçленӗ. Кунта кашни 15 лаша вӑйлӗ тракторпа 500-шер гектар ытла сухаланӑ. Яковлев юлташа тракторсене юсас ӗçе бригадӑра кӑтартуллӑ организацилени шӗн 1.500 тенкӗ укçа парса премиленӗ.

Паян Маркиянов юлташ ертсе пыракан трактор бригади те тракторсене юсамалли çулталӑкри плана ытлашшипех тултарнӑ.

Каникула савӑнӑçлӑн ирттерме хатӗрленнӗ

ИШЛЕЙ. Çӗньял-Покровскинчи çичӗ çул вӗренмелли шкулта вӗренекенсем хӗллехи каникула лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илеççӗ. Каникул вӑхӑтӗнче шкул ачисем валли çӗнӗ çул ӗлки пулать. Ӗлкӑна ирттерме пур классем те тӑрӑшса хатӗрленнӗ. 7-мӗш класра вӗренекенсем ӗлкӑна илемлетмелли теттесене хӑйсемех туса хатӗрленӗ.

Ӗлкӑра пур ачасене те çӗнӗ çул парнисем параççӗ. Фронтовиксен ачисене пама 7 мӑшӑр çӑматӑ, тиртен тунӑ 5 тумтир, 4 мӑшӑр костюм тата чӑлхасемпе алшишсем нумай пухса хатӗрленӗ.

Колхоз шкул ачисене хӑналама апат-çимӗç продукчӗсем тата 10 килограмм пыл уйӑрса панӑ. Каникул вӑхӑтӗнче ачасен канӑвне лайӑх ирттерме шкулта канмалли пӳлӗм пулать. Кунта хаçат-журналсем, шашкӑсемпе шахмӑтсем пулаççӗ. Чылай ачасем художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗн ӗçӗсене хутшӑнаççӗ.

П. АРБАТОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 29-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 29-мӗшӗнче ЧЕХОСЛОВАКИРЕ пирӗн çарсем ЛУЧЕНЕЦ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре çапӑçса малалла куçса пынӑ, ШИД, ЧОМА, БЬЕНА, ШЕРЕГ, ГАЙНАЧКА, ЯБЛОНИЦА, СТАРАЯ БАШТА ялӗсене тата ШИД чугун çул станцине тытса илнӗ.

Чехословакири ШАХЫ хулинчен çурçӗр хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем, малалла тапӑнса пырса, МАЛАЯ ЧАЛОМИЯ, ХРАСТИНЦЕ, ЛЕСЕНИЦЕ, ОПАТОВЦЕ, БАТОРОВА, НЕНИНЦЕ, СЕЛЯНИ ялӗсене туртса илнӗ. Çакӑнпа пӗр вӑхӑтрах ШАХЫ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем ГРОН шывӗ урлӑ каçса кайнӑ та ГРОН шывӗн хӗвеланӑç хӗрринче плацдарм тытса илнӗ, пирӗн çарсем унта НАНА, ПАРКАНЬ ялӗсене йышӑннӑ. Тӗрӗсленӗ даннӑйсем тӑрӑх, тӑшманӑн ИПЕЛЬ шывӗпе ГРОН шывӗ хушшинчи группировкине пӗтерессишӗн пынӑ çапӑçусенче декабрӗн 27-мӗшӗпе 28-мӗшӗнче пирӗн çарсем 6.000 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ, вӗсенчен 4.500 нимӗçе декабрӗн 28-мӗшӗнче тытса илнӗ. Çапӑçу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен 5.000 виллине çити выртса юлнӑ.

БУДАПЕШТ хули районӗнче пирӗн çарсем тӑшманӑн çавӑрса илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн çапӑçнӑ. БУДАПЕШТ хулин хӗвеланӑç пайне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та темиçе квартал йышӑннӑ. Çакӑнпа пӗр вӑхӑтрах пирӗн çарсем тӑшманӑн ДУНАЙ шывӗн кукринчи сӑртлӑ-вӑрманлӑ районра, БУДАПЕШТ хулинчен çурçӗртерехре çавӑрса илнӗ чаçӗсене пӗтерсе тӑкассишӗн ӑнӑçлӑн çапӑçнӑ. ЛЕАНИФАЛУ, ТАХИ-ТОТФАЛУ, ДУНА-БОГДАНЬ, ВИШЕГРАД, ПИЛИШСЕНТЛАСЛО, ПИЛИШСЕНТЛЕЛЕК ялӗсене туртса илнӗ. Ку районра пирӗн çарсем декабрӗн 28-мӗшӗнче нимӗçсемпе венгерсен 2.200 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Декабрӗн 28-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 99 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 14 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире Шахы хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем, тӑшманпа çапӑçса, малалла куçса пынӑ, темиçе ял туртса илнӗ. Пӗр чаçӑн подразделенийӗсем тӑшмантан айкран иртсе кайнӑ та нимӗç пехотин пӗр батальонне сасартӑк атакӑласа, аркатса тӑкнӑ. Çапӑçу хирӗнче 300 гитлеровец виллисе амаса выртса юлнӑ. Совет боецӗсем 19 пулемет тата 4 миномет тытса илнӗ.

Шахы хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре тӑшман çарӗсем темиçе хут каярах контратака пуçласа янӑ. Нимӗçсем çурçӗрелле кӗрсе кайнӑ совет чаçӗсен çулӗсене татма шутланӑ. Пирӗн танксемпе пехота çав тери хӑвӑрт маневр туса тӑшман группировки хыçне тухнӑ та хаяр çапӑçусенче çав группировкӑна пӗтерсе тӑкнӑ. Вилӗ моторизованнӑй полка, артиллери бригадине тата нимӗçсен ытти чаçӗсемпе подразделенийӗсене те пуçӗпех пӗтерсе тӑкнӑ. Юлашки икӗ кун хушшинче кӑна тӑшманӑн 45 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине çунтарса янӑ е персе çӗмӗрнӗ. Çитӗнӗве вӑйлатса пырса, совет чаçӗсем Грон шывӗ урлӑ каçнӑ та çав шывӑн хӗвеланӑç хӗрринче плацдарм тытса илнӗ. Çавӑн хыççӑн нимӗçсем хӑйсен çапӑçнӑ вырӑнӗсене туса тӑнӑ контратака тунӑ. Совет боецӗсем тӑшман отрячӗсене аркатса тӑкнӑ та çавӑрса илнӗ унка хӗснӗçӗсемӗн хӗссе пыраççӗ. Тулли мар даннӑйсем тӑрӑх, кун каçиччен тӑшманӑн 2.600 салтакӗпе офицерне çити пӗтернӗ, 30 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине çунтарса янӑ е персе çӗмӗрнӗ. Нимӗçсенчен 37 тупӑ, 11 бронетранспортер, танксен 30 моторне, 5 склад тата тӗрлӗрен çар хатӗрӗсем тиенӗ 400 вагон тытса илнӗ.

Нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан çапӑçусенче Хӗрлӗ Çар боецӗсем, сержанчӗсем тата офицерӗсем паттӑрлӑхпа геройлӑх кӑтартса çапӑçаççӗ. Бронебойщиксем гварди рядовойӗсем Макитьянпа Коваленко тӑшман контратакине сирсе янӑ чухне гитлеровецсене хӑйсем патне çывӑхах янӑ та танксене пемелли пӑшалпа нимӗçсен 3 бронетранспортерне персе çӗмӗрнӗ. Бронебойщик Константин Грон тӗл персе нимӗçсен пӗр бронетранспортерне тата икӗ танкне вут тивертсе янӑ. Гварди старшини Ненейко тата радист Павлюк ефрейтор пӗр вӗтлӗхре нимӗçсен хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине курнӑ. Хыçалтан пырса тухса, çак гвардеецсем тупӑ экипажне тапӑннӑ. Хирӗç тӑнӑ гитлеровецсене пӗтерсе пӑрахнӑ. Тупӑ водительне пирӗн боецсем тыткӑна илнӗ те ӑна çав хӑй тӗллӗн çӳрекен туппа хамӑр çарсем тӑракан вырӑна турттарса килтернӗ.

* * *

Будапешт хули районӗнче пирӗн çарсем çаплах тӑшманӑн çавӑрса илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн çапӑçнӑ. Совет чаçӗсем Будапешт хулин хӗвеланӑç пайне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та тӑшманпа хула урамӗсенче çапӑçма тытӑннӑ. Тӑшман хула урамӗсенче баррикадӑсем, танксене тата пехотӑна чармалли тӗрлӗ чӑрмавсем туса тултарнӑ. Урам кӗтессисенчи пур чул çуртсенчен те тата вӗсен подвалӗсенчен те дотсем тунӑ, дотсенче пулеметсем, минометсем тата танксене пемелли тупӑсем лартса тухнӑ. Совет боецӗсем, штурмлакан отрядсене пайланса кӗрешсе, нимӗçсен хирӗç тӑмалли узелӗсене çавӑра-çавӑра илеççӗ те вӗсен гарнизонӗсене пӗтере-пӗтере тӑкаççӗ. Тӑшман персе тӑнине тата унӑн инженери чӑрмавӗсене çӗнтере-çӗнтере, пирӗн чаçсем нимӗç çарӗсене çавӑрса илнӗ унка вӑйлӑрах та вӑйлӑрах хӗссе пыраççӗ. Унти çапӑçусенче тӑшман йывӑр çухатусем тӳсет. Хула урамӗсемпе килхушшисенче гитлеровецсен виллисем, вӗсен çӗмӗрсе тӑкнӑ тата пӑрахса хӑварнӑ хӗçпӑшалӗ йӑваланса выртаççӗ. Хула паркне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ пӗр чаçӑн подразделенийӗсене тӑшманӑн зенитнӑй артиллерийӗ пеме тытӑннӑ. Забобоков старши лейтенант боецӗсем, тупӑсемпе минометсем персе хӳтӗлесе пынипе, нимӗçсен зенитнӑй артиллери позицийӗсене çавӑрса илнӗ те кӗске тытӑçура тӑшман артиллерисчӗсене вӗлерсе пӗтернӗ.

Будапешт хулинчен çурçӗртерехре нимӗçсен сӑртлӑ-вӑрманлӑ районра çавӑрса илнӗ чаçӗсем хӗвеланӑçнелле татса тухма хӑтланнӑ, анчах та вӗсен ӗçӗ ӑнӑçман. Тӗрлӗ участоксенче нимӗç пехотин пӗр-пӗринчен татӑлса пӗтнӗ ушкӑнӗсем, танксем те артиллери пулӑшнипе, темиçе хутчен те контратака тунӑ.

* * *

Белоруссири 2-мӗш фронтра пирӗн авиаци тӑшманӑн вӑрçӑ объекчӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Сьверче чугун çул станцинче, бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе, нимӗçсен çар эшелонне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Забеле-Вельке станцийӗнче совет летчикӗсем 2 паровоз тата 10 вагон пӗтерсе тӑкнӑ. Фронт линийӗ патне пыракан шоссе çулӗсем çинче пирӗн истребительсемпе штурмовиксем тӑшманӑн темиçе автоколоннине аркатса тӑкнӑ.

* * *

Нимӗçсен 271-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 979-мӗш полкӑн 13-мӗш ротинчен Будапешт хулинчен хӗвеланӑçнерехри районра тыткӑна лекнӗ салтак Эдмунд Прассель çапла каласа кӑтартнӑ: «Декабрь уйӑхӗн варринче офицерсем салтаксем хушшинче фронтри лару-тӑру çинчен каласа çӳресем туса ирттерчӗç. Çавӑн чухне вӗсем—эпир часах наступлени пуçласа яратпӑр, терӗç. Рота командирӗ Фурман çапла каларӗ: нимӗçсен командованийӗ вырӑс çарӗсене Будапешт районӗнче кӑнтӑр еннелле пырса çапать те вырӑссен Дунай шывӗн хӗвеланӑç хӗррине каçса кайнӑ çарӗсене татса илет, терӗ. Ноябрӗн 19-мӗшӗ ырал тенӗ чух çӗрле пирӗн пата полк командирӗ фон Кирмастер полковник килчӗ. Вӑл çапла каларӗ: çак çывӑх кунсенчех вырӑс дивизийӗсем Дунафельдвар районӗнче «хурана» кӗрсе ӳкмелле, терӗ. Анчах та «хурана» кӗрсе ӳкекеннисем вырӑссен дивизийӗсем мар, нимӗç дивизийӗсем пулчӗç».

Союзсен Çуртӗнчи Çӗнӗ çул ӗлки

Декабрӗн 28-мӗшӗнче Мускавра, Союзсен Çуртӗн Колоннӑллӑ залӗнче çӗнӗ çул ӗлкине çутса янӑ. 2.000 ачана яхӑн пухӑннӑ. Зала тата фойене çав тери илемлетнӗ. Çулталӑкри вӑхӑтсене палӑртса, кашнийӗ хӑйне уйрӑм сӑнпа сӑрласа илемлетнӗ: ылттӑн кӗркуннe, симӗс çуркунне, сарӑ çулла тата шап-шур хӗлле. Стенасене вырӑс полководецӗсен, Отечественнӑй вӑрçӑ геройӗсен, çулçӳревçӗсен тата ученӑйсен ӳкерчӗкӗсемпе илемлетнӗ. Унта карусельсем те тата ытти тӗрлӗ вӑййӑсем те пур.

Ӗлка январӗн 20-мӗшне çитиччен пырать. Çав хушӑра унта 140 пин ача пырса курмалла. (ТАСС).

ПЕТЕМ СОЮЗРИ ЯЛХУÇАЛАХ НАУКИСЕН АКАДЕМИЙЕН СЕССИЙЕ

Мускавра Пӗтӗм Союзри ялхуçалӑх наукисен В. И. Ленин ячӗпе тӑракан академийӗн черетлӗ сессийӗ хупӑннӑ. Сессире Академи институчӗсемпе академиксен 1944 çулта тунӑ ӗçӗсен итогӗсене пӑхса тухнӑ тата 1945 çулта тумалли ӗçсем çинчен сӳтсе явнӑ.

Сесси ялхуçалӑх наукисен учрежденийӗсен директорӗсем тунӑ 13 доклада итленӗ. Академи президенчӗ Т. Д. Лысенко ялхуçалӑх наукисен черетлӗ задачисем çинчен тунӑ хӑйӗн докладӗнче ялхуçалӑх тӗлӗшпе тумалли наукӑллӑ ӗçсен анлӑ программине палӑртса панӑ. Çавӑн пекех сесси Одессӑри селекципе генетика институчӗ ӗнсе каланине сӳтсе явнӑ. Çав институтӑн наука работникӗсем çӗршыври пур ялхуçалӑх институчӗсене те ялхуçалӑхне ытларах пулӑшмашкӑн социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнне. (ТАСС).

Ӳкерчӗк çинче: пирӗн чаплӑ земляк—Совет Союзӗн Геройӗ майор Николай Григорьевич Безруков. Вӑрçӑччен вӑл Пӑрачкав районӗнчи Снява ялӗнчи вӑтам шкулта учитель пулса ӗçленӗ.

ХАРПӐРХӐЙ ПЕРЕКЕТЛЕСЕ ХӐВАРНӐ ТЫРРА—ХӖРЛӖ ÇАР ФОНДНЕ

ÇЕРПӲ, декабрӗн 30-мӗшӗ. (Телефонпа). Харпӑрхӑй перекетлесе хӑварнӑ тырра Хӗрлӗ Çар фондне парас ӗç районра пысӑк сӗкленӳпе пулса пырать. Кашни колхозрах пухусем пулса иртрӗç. Колхозсенчен пӗлтернӗ тӑрӑх пирӗн колхозниксем хӑйсен запасӗнчен ... 000 пӑт, колхозсен фондӗнчен 1000 ... пама йышӑннӑ. Çак тырра хатӗрлев ... пунктне леçес ӗç куçланса кайрӗ. Паянхи кун тӗлне колхозниксем хӑйсен запасӗнчен 732 пӑт, колхоз фондӗнчен 183 пӑт хатӗрлев пунктне леçнӗ. Нумай колхозсем малтан йышӑннинчен ирттерсе параççӗ. «Ӗмӗт» колхоз членӗсем 150 пӑт вырӑнне 168 пӑт леçсе панӑ. «Пионер» колхоз членӗсем 120 пӑт вырӑнне 140 пӑт леçнӗ. Çавӑн пекех «Красный герой», «Красная Армия», «Планета», «Авангард» Молотов, Ильич ячӗсемпе тӑракан колхозсем те хӑйсем йышӑннинчен ирттерсе панӑ. Молотов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Дашков юлташ 1... пӑт, Кӑшаркасси ялсовет председателӗ Ефимов юлташ 6 пӑт, «Планета» колхоз счетовочӗ Васильев 6 пӑт тырӑ Хӗрлӗ Çар фондне пачӗç.

Унсӑрӑн пуçне районри нумай колхозсем шайкка тыррине аванс шучӗпе 1945 çулшӑн парса хураççӗ. Пурӗ 4880 пӑт пама йышӑннӑ, вӑл тырӑран паянхи куна 67... пӑтне хатӗрлев пунктне леçсе панӑ.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

* * *

СӖНТЕР, декабрӗн 30-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем Хӗрлӗ Çар фондне пама йышӑннӑ тырра хатӗрлев пунктне леçсе пӗтереççӗ. «КИМ» колхоз (председателӗ Беляков юлташ) членӗсем 300 пӑт леçнӗ. Çавӑн пекех «Новый мир», «Коммунар», «Ударник» колхозсен членӗсем те хӑйсем пама йышӑннӑ тырра хатӗрлев пунктне леçсе пӗтернӗ.

Сӗнтӗр районӗнчи колхозсем шайкка тыррине 4884 пӑт леçме пулнӑ. Çак тырра леçес тӗлӗшпе уйрӑмӑнах комсомолецсем лайӑх ӗçлеççӗ.

Колхоз председателӗсен Шупашкарти курсӗнче

Декабрӗн 30-мӗшӗнче Советсен çуртӗн ларусем пулакан залӗнче колхоз председателӗсен Шупашкарти курсӗнче вӗренекенсен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Курсантсем Рогоцкий юлташ Совет Союзӗн пӗтӗм тӗнчери тата шалти лару-тӑрувӗ çинчен тунӑ доклада тата ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Ахазов юлташ пирӗн республикӑри колхозсемпе колхозниксем фронта пулӑшни çинчен каланине питӗ тимлӗн итлерӗç.

Республикӑри малта пыракан колхозниксем харпӑрхӑй запасӗнчен Хӗрлӗ Çар фондне тырӑ парас тӗлӗшпе тунӑ пуçарӑва пухура пулнӑ колхоз председателӗсем пӗр кӑмӑллӑ пулса ырларӗç.

Пухура тухса каласа, Сӗнтӗр районӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Леонтьева юлташ çапла каларӗ: «Халӗ ӗнтӗ çӗнтерӳ сехечӗ çывӑх, анчах тӑшмана хӑвӑртрах çапса аркатас тесен, пирӗн Хӗрлӗ Çара мӗн кирлине пурне те парса пулӑшмалла. Эпӗ хам перекетленӗ тырӑран 35 пӑт Хӗрлӗ Çар фондне хывататӑп», терӗ.

Комсомольски районри «Трактор» колхоз председателӗ Иванова юлташ тата хӗрӳллӗ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл Хӗрлӗ Çар фондне 20 пӑт тырӑ пама пулчӗ.

Çак патриотсен чӗнӗвне пухура пулнӑ ытти юлташсем те ырласа йышӑнчӗç. Куславкка районӗнчи «Динамо» колхоз председателӗ Ефремов тата Вӑрмар районӗнчи «Хӗрлӗ Мӑрат» ялхуçалӑх артелӗн председателӗ Данилов юлташсем хӑйсен запасӗнчен 12-шер пӑт тырӑ Хӗрлӗ Çар фондне пама пулчӗç. Красноармейски районри «Жнейка» колхоз председателӗ Петров, Советски районри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Анчиков юлташсем 10-шар пӑт пама пулчӗç.

Çавӑн пекех Егоров (Чурачӑк районӗнчи «Гигант» колхоз), Лукин (Вӑрмар районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз) тата ытти юлташсем те Хӗрлӗ Çар фондне тырӑ пама пулчӗç.

Пуху республикӑри колхозсен пур председателӗсене те Хӗрлӗ Çар фондне тырӑ панӑ çӗре активлӑн хутшӑнма чӗнчӗ.

ЧĂВАШ КОММУНИ
256 (6751) №, 1944 ç., декабрь 31.

Укерчĕк çинче: пирĕн чылă земляк — виçĕ степень Мухтав орденĕсен кавалерĕ гварди кĕçĕн лейтенанчĕ Порфирий Герасимович Кариков. Вăл 26 нимĕçе тыткăна илнĕ, çав шутра — 3 офицера.
Кариков юлташ Чкаловски районĕнчи Чăваш Сăкăчĕ ялĕнчен.

Шкул ачисен хĕллехи каникулĕ

Январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшĕччен шкулсенче хĕллехи каникул пулать. Ун чухне шкулсемпе пионерсен çуртĕсенче, рабочисен клубĕсенче, кинотеатрсенче çĕнĕ çул ёлкисем пулса иртеççĕ. Тăрăшса вĕреннĕ хыççăн шкул ачисемпе пионерсем киносемпе театрсенче, концертсенче пулса, культурăллă канаççĕ. Катоксемпе стадионсенче, спорт залĕсенче пулса, йĕлтĕрсемпе çӳресе, кăйсен сывлăхĕсене тĕреклетеççĕ. Вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнче тата тимлĕрех вĕренме çĕнĕ вăй пухаççĕ.

Каникул вăхăтне лайăх тата усăллă ирттерес тесен, ăна малтанах хатĕрленес пулать. Республикăри чылай шкулсенчи пионер дружинисен штабĕсем хĕллехи каникула тивĕçлипе хатĕрленчĕç. Шупашкар хула комитечĕпе кинотеатр дирекцийĕ декабрĕн 29-мĕшĕпе январĕн 13-мĕшĕ хушшинче Шупашкарта ачасен кинофестивальне ирттерме палăртнă. Фестиваль вăхăтĕнче хулари çамрăксем совет кинематографинчи лайăх произведенийĕсене: «Карэ», «Детство Горького», «В людях», «Брит героя», «Зоя», «Во имя Родины», «Котовский» тата ытти картинăсене те кураççĕ. Кинотеатрта—фойере çĕнĕ çул елки пулать. Киносеанссем пуçланас умĕн шкулсенчи художествăллă кружоксен выступленийĕсем, лекцисемпе массăллă вăйăсем пулаççĕ. Çамрăксем хулари шкулсенчи лайăх учительсемпе тата фронтовиксемпе тĕл пулса калаçаççĕ.

Шупашкарти Пионерсен çуртĕ те шкул ачисемпе пионерсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илме хатĕрленчĕ. Кунта шкул ачисен капăр елкисене тăваççĕ. Вĕренӳ отличникĕсен, 1-мĕшпе 2-мĕш, 3-мĕшпе 4-мĕш, 5—6—7-мĕш классенче вĕренекенсен уйрăм елкисем пулаççĕ. Унтах вăйăсемпе ташăсем, концертсем ирттереççĕ, лайăх кинокартинăсем кăтартаççĕ, художествăллă пултарулăх кружокĕсемпе пионерсен çуртĕнчи ансамблĕн, драма студийĕн выступленийĕсем пулаççĕ. Унсăр пуçне, шкул ачисем кунта каникул вăхăтĕнче «Март—апрель», «Битва за Севастополь», «Партизаны в степях Украины», «Актриса» тата ытти картинăсене те кураççĕ.

Чăвашсен Академи театрĕн артисчĕсем «Поединок» пьесăна лартаççĕ. Государство филармонийĕн артисчĕсем концерт параççĕ. Пукансен театрĕ хăйĕн çĕнĕ номерĕсене кăтартать. Ачасем Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тĕл пулса калаçаççĕ. Çамрăк шахматистсем валли шашкăпа шахмат турнирĕ пулать. Шкулсенчи отрядсен пионер вожатăйĕсем искусство работникĕсемпе тĕл пулса калаçаççĕ. Хулари шкулсенчи пионерсен дружинисем йĕлтĕрлĕ ăмăртусем ирттереççĕ.

Арçын ачасен Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн ĕç планĕ тăрăх каникул вăхăтĕнче тĕрлĕрен экскурсисем ирттерме палăртнă. Сăмахран, хулари электростанцие, тир-сăран заводĕнче пулса, унти производствăпа паллашаççĕ. Шкулти истори кружокĕ «Авалхи тата паянхи Шупашкар» темăпа докладсем ирттерет. Хĕрачасен Шупашкарти 1-мĕшпе 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче вĕренекенсем, шефа илнĕ госпитале кайса, хăйсен художествăллă пултарулăхне кăтартаççĕ. Госпитальре выртакан аманнă боецсем валли парнесем хатĕрлеççĕ.

ВЛКСМ Улатăр хула комитечĕ хулари шкул ачисемпе пионерсем валли çĕнĕ çул ячĕпе бал-маскарад ирттерет. Кунсăр пуçне, шкулсенче елкăсем, кинотеатрта кино-утренниксем пулаççĕ. Хулари ФЗО шкулĕсемпе чугун çул училищисенче вĕренекенсемпе вăтам шкулсенче вĕренекенсем хушшинче йĕлтĕрлĕ ăмăртусем пулаççĕ, аслă классенче вĕренекенсем 25 километрлă йĕлтĕрлĕ поход ирттереççĕ. Çавăн пекех ачасем шефа илнĕ госпитальсенче пулса, хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Советски районри шкулсенче те хĕллехи каникула хатĕрленес ĕç тимлĕн пычĕ. Шкул ачисем уроксем хыççăн спектакльсем лартма, художествăллă пултарулăх каçĕсем ирттерме, отрядсемпе звеносем спорт ăмăртăвĕсем ирттерме хатĕрленеççĕ, тĕрлĕрен вăйăсемпе юрăсем вĕренеççĕ. Мăн Ямашри вăтам шкулта вĕренекен пионерсемпе шкул ачисем Отечественнăй вăрçă партизанĕ Андронников юлташпа тĕлпулу туса ирттереççĕ. Чылай шкулсенче кăçал тин шкула çӳреме пуçланă çамрăк ачасем валли тĕрлĕрен парнесем хатĕрлеççĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

НАУКА АКАДЕМИЙĔН ЛИТЕРАТУРА ИНСТИТУТĔНЧИ НАУЧНĂЙ КОНФЕРЕНЦИ

Ленинградра Наука академийĕн Литература институтĕнче, вырăс литератури тĕнчере мĕнле вырăн йышăнса тăнине сӳтсе явас шутпа, научнăй конференци уçăлнă.

Фронтран килнĕ саламсем

Ача амăшĕ-героине Евдокия Ефимовна ЕФИМОВАНА

Эпĕ—чăваш. Хĕрлĕ Çарта 1940-мĕш çултанпа пурăнатăп. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче 1941 çулхи июнĕнчен вăрçăпатăп. Нимĕç пусмăрçисене, ирсĕр захватчиксене эпĕ 58 сынна пĕтерсе тăкрăм. Хама ... амантрĕç. Правительство мана ... çапăçури ... пысăка хурса хакларĕ. Эпĕ «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ тата Отечественнăй вăрçăн II-мĕш степень орденне илме тивĕçлĕ пултăм.

Паян эпĕ «Правда» хаçатра СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1944 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче йышăннă Указа вуласа тухрăм та Сире, Евдокия Ефимовна, «Ача амăшĕ-героиня» текен хисеплĕ ята панă игпа саламлас терĕм. Çакă вăл—ССР Союзĕн хĕрарăмĕсемшĕн чи пысăк награда! Хамăн çемьерен эпĕ пĕчченех фронтра вăрçă пуçланнăранпа çапăçатăп, эпĕ пĕччен те 58 нимĕçе вĕлертĕм. Сирĕн 5—6 ывăл фронтра çапăçаççĕ пулĕ, вĕсем çĕршер нимĕçе ... тĕнчене ăсатнă пулĕ. Çакă вара—чи хаклă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн Правительство Сире тивĕçлипех çав хисеплĕ ята парса чыс турĕ! Пирĕн çĕршывра этем—ылттăнран та хаклă!

Сире, Евдокия Ефимовна, «Ача амăшĕ-героиня» тесе хисеплĕ ят панă майпа татах тепĕр хут салам калатăп тата нумай-нумай çулсем телейлĕ пурăнма сывлăх сунатăп.

Икĕ хут орден илнĕ капитан И. П. ШИШКИН.
Полевая Почта 21101—Г.

Евдокия Ефимовна! Сире йывăрах пулмасан, ман çыру пирки ответ пама ыйтатăп.

ИОСИФ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарьне ЧАРЫКОВ юлташа

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ! Эсир И. В. Сталин юлташ пативе çырнă çырăва эпир хаçатра вуласа пăхрăмăр, пирĕн чăваш халăхĕ Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшнăшăн савăнтăмăр.

Фронта çавăн пек пысăк пулăшу паракан пĕтĕм чăваш халăхне пирĕнтен — фронтовиксенчен — хĕрӳллĕ салам калăр.

Юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисемпе работницăсем! Эпир хамăрăн Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатрăмăр. Вăхăт çитĕ, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса аркатăпăр, Гитлер бандичĕсене тĕп тăвăпăр. Эсир те пире пĕтĕм вăйпа пулăшса тăрăр.

Чăваш халăхĕн фронтри ывăлĕсем—красноармеецсем: А. С. ЯКИМОВ, П. П. ПАХОМОВ, А. П. ПЕТРОВ.
Полевая Почта 92043—В.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне З. АНДРЕЕВА юлташа

Чи малтанах, Тăван çĕршыва сыхлакансенчен пысăк та хĕрӳллĕ салам йышăнма ыйтатпăр.

Эпĕ Сире чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем Верховнăй Главнокомандующин приказне мĕнле пурнăçласа пыни çинчен çырса пĕлтерес терĕм. Пирĕн чаçре виçĕ чăваш. Пĕри —вăрçăччен Елчĕк районĕнчи Курнаш ялĕнче учитель пулса ĕçленĕ, халĕ старши сержант П. Е. Смирнов; иккĕмĕшĕ—Елчĕк районĕнчи Кив Эйпеç ял çынни кĕçĕн сержант Н. В. Деряков; виççĕмĕшĕ—Чкаловски районран килнĕ сержант Я. С. Сукорев.

Вĕсем Отечественнăй вăрçă фронтĕнче 1942 çултанпа çапăçаççĕ. Çапăçусенче хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, Командованин приказĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн П. Смирнов юлташа виçĕ хутчен, Н. Деряков юлташа икĕ хутчен тата Я. Сукорев юлташа пĕр хутчен Правительство наградисене панă.

Чăваш халăхĕн çак паттăр ывăлĕсем пирĕн чаçре чи лайăх воинсем пулса тăраççĕ, эпир вĕсемпе тивĕçлипе мухтанатпăр.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсенчен вĕсен тăванĕсене, землякĕсене хаçат урлă салам калăр; вĕсен ашшĕ-амăшĕсем, тăванĕсем, колхозниксем,—пĕтĕм чăваш халăхĕ вĕсем çинчен пĕлсе тăччăр, вĕсемпе мухтанччăр.

Часть командирĕ капитан СМОЛЕНКО.
Полевая Почта 74139—М.

Хаклă землякcене — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ĕççыннисене

Эпĕ—орденлă Чăваш республикин ывăлĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче çуралса ӳсрĕм, вăрçă ĕçне юратса вĕрентĕм. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра рядовойран старши лейтенанта çити ӳсрĕм. Вăрçăра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн мана Отечественнăй вăрçă орденĕ тата икĕ хутчен «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕсем пачĕç.

Мана çавăн пек хăюллă пулма вĕрентсе хатĕрленĕшĕн Сĕнтĕрвăрри райвоенкомачĕнчи тата Осоавиахим райсоветĕнчи юлташсене тав тăватăп.

Халĕ эпир тăшман çĕрĕ çинче çапăçатпăр. Фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмĕшпех çапса аркатса татăклă çĕнтерӳ тăвассин инçе юлмарĕ. Çак çĕнтерĕве çывхартма фронта вăрçă хатĕрĕсем, апат-çимĕç сахал мар кирлĕ. Эпир — фронтовиксем—пирĕн паттăр тыл фронт ыйтнисене ытлашшипех пырасса шанатпăр.

Çырăр. Сирĕн ăшă кăмăллă çырăвăрсем пире çапăçура вăй-хăват параççĕ.

Сире инçетри вăрçă хирĕнчен салам!

Виçĕ хут орден илнĕ старши лейтенант И. ГРИГОРЬЕВ.
Полевая Почта 49817—Х.

Тылри юлташсене

Эпĕ Чăваш республикинчи Вăрмар районĕнчи Аранçу ялĕнчен. 1943 çулхи октябрь уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм. Темиçе уйăх ĕнтĕ фронтра çапăçатăп. Эпĕ Советлă Белоруссин, Литва çĕрĕсене нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă çĕрте пултăм. Ялсем, хуласем витĕр тухнă чухне пире хамăрăн тăвансем савăннипе куççуль тăкса ăсататчĕç. Халĕ Польшăра çапăçатăп.

Пĕр çапăçура мана хытă амантрĕç, çак вăхăтра мана килтисем çухатнă, анчах эпĕ, сывалса, каллех фронта килме тивĕçлĕ пултăм.

Тăшмана хирĕç хăюллăн çапăçнăшăн мана Правительство икĕ хут «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ парса наградăларĕ. Çак награда çине ответлесе, эпĕ хамăн пурнăçа шеллемесĕр тăшмана хирĕç кĕрешĕп, тесе сăмах паратăп.

Старшина-орденоносец П. ФИЛИМОНОВ.
Полевая Почта 24446—П.

Болгарие вăрçа хутшăнтарнăшăн айăплă çынсене суд тума Болгари правительстви аллине панă

Болгарире çар преступникĕсене суд тума пуçланине пула, Болгарие Пĕрлешӳллĕ Нацисене хирĕç пыракан вăрçа хутшăнтарнăшăн айăплă çынсене, совет çарĕсен командованийĕ арестленĕскерсене, Болгари правительстви хăй аллине пама ыйтнă.

Совет правительстви, Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисемпе килĕшсе, Болгари правительстви ыйтнипе килĕшнĕ. Çавăн пирки те Болгари правительстви аллине çак çынсене панă: Болгари регенчĕсем пулнă çынсене—1. Кирилл Преславский Сакс-Кобург-Готский князе, 2 Богдан Филов профессора, 3. Никола Михов генерала; Болгарин министрĕсем пулнă çынсене—4. Доби Божилова, 5. Петр Габровски, 6. Димитр Васильева, 7. Димитр Шишманова, 8. Парван Драганова, 9. Константин Муравиева, 10. Никола Хаджи-Петков генерала, 11. Константин Лукаш генерала панă. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Тăшман патрулĕсем Голландире Маас шывĕ таврашĕнче хастарлăн çапăçаççĕ. Арденра нимĕçсем шăтарса кĕнĕ вырăнăн сурçĕр флангĕнче, Ставлопа Оттон хушшинче, тăшман тапăнса пырасси чакнă. Хаярран çапăçнă хыççăн союзниксем каллех Манэ, Гранмениль тата Юмен хулисене тытса илнĕ. Оттонпа Марш хушшинче тăшман тунă атакăсене нимĕçсене пысăк сухатусем кӳрсе сирсе пăрахнă. Унтан хĕвеланăçнерехре тăшманăн çавăрса илнĕ çарĕсене пĕтерсе пыраççĕ. 1.000 çын ытла тыткăна илнĕ тата çар техники, вăл шутра танксем те нумай тытса илнĕ. Тăшманăн пĕр-пĕринчен уйрăлса кайнă отрячĕсем Сент-Юбер таврашĕнче питĕ вăйлă хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Союзниксен Батонь хулинчи чаçĕсемпе пĕрлешнĕ ытти çарĕсем çав хулана кĕрсе кайнă. Унтан кăнтăр хĕвеланăçнерехре союзниксем Сирбре хирине çитнĕ тата кăнтăрарахра Омпр хулине тăшмантан тасатнă. Арсенуаран çурçĕрехри вăрмансенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем тăшман шăтарса кĕнĕ вырăнăн кăнтăр енче халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ, ... çывăхĕнче союзниксем Сюр шывĕ урлă каçнă. Дикирхпа Эхтернах хушшинче ... йонра союзниксен патрулĕсем виçĕ тĕ... Сюр шывĕ патне тухнă.

Çанталăк япăх пулни союзниксен авиацийĕн ĕçне чăрмантарнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕ хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италире, Серкьо улăхĕнче çапăçусем ... ланнă. 5-мĕшпе 8-мĕш армисен патрулĕ ... çеç çапăçнă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕ авиацийĕн самолечĕсем 2.600 хут вĕ... тухнă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Хĕвелтухăç Боснире, Биелина—Брчко секторĕнче, хаяр çапăçусем пыраççĕ. Вардиште секторĕнче Югослави чаçĕсем халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ, вăл шутра Кадина Главица. Нимĕç чаçĕсене Мокра Гора патне хăваласа янă, унта халь вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Санджакра Биело Поле Триеполье çулĕ çинче нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă.

Черногорире Югослави чаçĕсем Матешевопа Мойковац хушшинчи çулпа каяла чакакан нимĕçсен колоннисене аркатса ... ланă.

Хорватире нимĕçсемпе усташа чаçĕ танксем пулăшса пынипе, Загреб—Карловац районĕнчен Писаровины енне ... сăк вăйсемпе наступлени пуçласа янă. ... кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн ... манăн наступленине чарнă, унтан Югославии чаçĕсем контрнаступлени тунă та ... мĕçсемпе усташасене каялла хăваласа ...

Словенире Югослави чаçĕсем ... Горица енчи темиçе çирĕплетнĕ пункта йышăнса илнĕ. Аркатса тăкнă тăшман чаçĕсене хăваласа пырса, Югослави çарĕсем Идрия шывĕ хĕррине тухнă.

Совет Союзĕн Францири посолĕ А. Е. Богомолов Париж ратушинче сăмах тухса калани

ПАРИЖ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Франс-Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Парижри Ирĕклĕх Комитечĕ тунă йышăнура Парижри ратушăра Совет Союзĕн Парижри посолĕ Богомолов сăмах тухса каланă.

«Франци республикин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхĕ де Голль генерал Мускава кайнине,—тенĕ Богомолов,—çавăн пекех тата Молотовпа Бидо алă пуснă договора СССР халăхĕпе Франци халăхĕ хĕрӳллĕн ырласа йышăннă. Декабрĕн 10-мĕшĕнче алă пуснă договора пирĕн ... семпе союзниксем — США-па Англи ... ырланă. Европăри пĕчĕк государс... çав договор хăйсене хăрушсăрлăх ... туйса илнĕ. Демократиллĕ çĕршывсем ... рĕç вăрçакан Германи кăна çав до... кураймасть. Англи, СССР тата США ... лешсе ĕçлес тĕлĕшпе çак пирĕн ... Европăри хăрушсăрлăхпа мирĕн çир... кĕсĕ кăна пулса тăмĕ, вăл тата пире шывсем хушшинчи туслăха тата пĕр... юратассине ытларах çирĕплетĕ».

СОВЕТ ПРОФСОЮЗĕСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĕ ПАРИЖРА

ПАРИЖ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: ĕнер совет профсоюзĕсен делегацийĕ тата Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕн бюровĕ профсоюзсем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлесси çинчен тата гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре пĕр-пĕринпе союзлă п... тата пĕр-пĕрне пулăшасси пирки ... договор тăрăх хăйсен правительст... пур майпа та вăйлă пулăшса тăрас... чен сӳтсе явнă. Вĕсем пĕр-пĕрине ... та туслăн калаçнă.

ПАРИЖРИ МЕТРО КОМПАНИЙĔН ПУРЛĂХНЕ ТЫТСА ИЛМЕ ЫЙТНИ

ПАРИЖ, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Франс-Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Парижри Ирĕклĕх Комитечĕн ларăвĕнче, пурте пĕр шухăшлă пулса, Парижри метро компанийĕн пурлăхне вăхăтлăха тытса илме тата унăн оккупаци вăхăтĕнче тăшманпа килĕштерсе ĕçленĕ дирекцийĕн представителĕсене суда пама ыйтнă.

РЕНО ЗАВОЧĕСЕНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (... АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ф... Вăхăтлăх Правительстви Рено зав... национализацилеме йышăннă. Пе... хыççăн Рено нимĕç оккупанчĕсемшĕн ... ленĕ пулнă. Правительство декрече ... Рено аллинче пулнă тата Рено ком... тĕрлĕ предприятийĕсен управляющ... аллинче пулнă акцисене конфиска... Рено предприятийĕсене малашне ... тельство лартнă директор, админ... совечĕ тата предприяти комитечĕ ... ымалла.

ИТАЛИ ПАТРИОЧĕСЕМ ФАШИ... ПУÇЛĂХНЕ ФАРИНАЧЧИНЕ ВĔ...

ПАРИЖ, декабрĕн 27-мĕшĕ. (... Франс-Пресс агентстви Итали... çапла пĕлтернĕ: Кремона районĕнчи патриочĕсем Италири фашистсен па... пуçлăхĕсенчен пĕрне—Муссолини ху... кине —Роберт Фариначчине вĕлернĕ. ... хăй юлашки вăхăтра пурăннă Мюнхен... Кремонăна автомобильпе кайнă чухне ... лернĕ. Çак ĕçе çурçĕр Италире фаши... хирĕçле вăрттăн ĕçлекен организаци... пĕсен ушкăнĕ туса ирттернĕ. Çав орг... зацин членĕсем фашистсен пальтă пуçл... сене чылайĕшне вĕлернĕ ĕнтĕ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТА... Рейтер агентствин специальнăй коррес... денчĕ Афины хулинчен çапла пĕлт... паян тул çутăлнă тĕле Англи çарĕсем ... дито сăртне атакăланă. Вăл хула цент... че партизансен аллинче юлнă. тĕрекл... пунктсенчен пĕри шутланать. Атака ... артиллерирен икĕ сехет хушши пĕрсе ... Афины хулин кăнтăр-хĕвелтухăç пайн... тĕм хупласа илнĕ.

КĔСКЕН

* Далмацире (Югослави) строител... ĕçĕсем анлăн сарăлса кайнă. Пур ... сенче те çулсене тата аркатса тăкнă ... персене юсаççĕ. Боксит рудникĕсене, ... нăсем тăвакан верфьсене, папирос ф... кине, цемент заводне тата ытти пред... тисене те юсаса ĕçе янă. Пурăнмалли ... миçе пин çурта юсанă. (ТАСС).

* 1945 çулта США-ра, 1944 ç... танлаштарсан, суту-илӳ судниcене 3 ... лион тонна ытларах тума палăртса ху...

* Юлашки вăхăтра американецсен ... воднăй лодкисем Лăпкă океанра япон... 27 суднине путарнă, вĕсен шутĕнче ... пысăк авианосец пур. Вăрçă пуçлан... па Лăпкă океанра американецсен по... нăй лодкисем японецсен 1.090 суднин... тарнă е сиен кӳнĕ, вăл шутра 126 ... карапĕ.

Хуйхăпа телей

Тăваттăмĕш хут ĕнтĕ эпир çĕнĕ çула çывăх çынсенчен уйрăм кĕтсе илетпĕр. Пирĕн çавар тӳпине эрех мар, тăварлă куççуль, пăшăрхану йӳçĕтет. Анчах халĕ эпир пĕрне-пĕри: чи хăрушши хайра, тесе калама пултаратпăр. Шуçăм кăвакарать, умра—çĕнтерӳ, кĕтнĕ мирлĕ пурнăçăн пирвайхи ирĕ.

Аса илер-ха: нимĕçсем Атăл çине тухнăччĕ. Аса илер-ха: нимĕçсем Египетра пулнăччĕ. Аса илер-ха: «фюрер» сасăсăр шаккал пек улатчĕ. Мускав çывăхĕнчи ялсенче Россия салтакĕсем тăшман атакисене сире-сире пăрахатчĕç. Ун чухне вĕсем Берлин çинчен шухăшламан, Мускава хӳтĕлесси çинчен шухăшланă. Çулталăк иртсен, Сталинград килсе тухрĕ. Атăлăн сулахай енчен пăхсан, пушарсем курăнатчĕç, çавăнтах—пулăшупа килекен çарсем вилĕм куратчĕç. Ун чухне Хĕвелтухăç Прусси çинчен мар, тăшман пит нумай шăтарса кĕни çинчен, вăл Кавказ тăвĕсем çине кармашни çинчен, Атăл хирĕсем тăрăх тустарса çӳрени çинчен шутланă. Тăшмана чарса лартас тесе, совет çыннисем вилĕмрен те хăраман.

Хуйхăллă çулсене манмăпăр эпир. 1942-мĕшĕнчи çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ чухне эпир Калуга хулине ирĕке кăларнипе савăнтăмăр. 1943 çула кĕтсе илнĕ чухне эпир нимĕçсене Сталинград патĕнче хупăрласа илнипе савăнтăмăр. Мĕн каласси, пĕлтĕр те эпир Будапешт çинчен шутламанччĕ-ха, пирĕннисем Житомира çитнĕ, тесе савăннаттăмăр. Тăранма пĕлмен çулсем пирĕн çамрăклăха, пирĕн ачасене çиетчĕç. Халĕ, акă, çĕнĕ цифра: 1945... Халĕ эпир карттă çине савăнăçлăн пăхма пултаратпăр. Сроксем çинчен те эпир хамăра лăплантарса çеç мар, тӳрремĕнех калама пултаратпăр. Сĕм вăрмантан унăн хĕррине тухрăмăр, авă вăрман вĕçĕ те куç умĕнчех.

Нимĕçсен пĕр журналисчĕ, хăйсен çыннисене лăплантарас шутпа, çапла çырать: «Шутласа тухас пулсан, иртнĕ çулта эпир куçа куранниччен сахалтарах çухатусем тӳсрĕмĕр», тет. Вилĕм умĕнче те вĕсем суйма пăрахмаççĕ-ха... Шутлас тăк шутлас! Иртнĕ çулта вĕсем Украинăн сылтăм пайĕнчен, Крымран, Белоруссирен, Эстонирен, Литваран, Латвирен, Молдавирен тухса тармалла пулчĕ. Европăри 17 столицăран 10-шне вĕсем çухатрĕç. Тăватă союзникрен вĕсен пĕрре кăна тăрса юлчĕ. Вĕсем çухатнă «тигрсен», «мессерсен», генералсен, обер-лейтенантсен, фрицсен шутне Германири мĕнпур счетоводсем те шутласа тухас çук. Вĕсем шанчăка çухатрĕç. Çулталăк каярах кăна вĕсем Ленинград патĕнче тăратчĕç. Вĕсем Римра хуçаччĕ. Вĕсем Марсельпе Одессăра хĕл каçатчĕç. Вĕсем Парижпа Афины хулисенче канатчĕç. Вĕсем Европăна хăйсен ал линче тытса тăратчĕç. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар Югославире, Венгрире, Чехословакире, Норвегире, Пруссире. Халĕ ĕнтĕ пирĕн союзниксем Хĕвеланăç Германире. Тискер кайăк хăй ярса илнĕ апатне пăрахрĕ. Тулхăра-тулхăра та пулин, вăл хăйĕн тискер чĕрнисене, хăйĕн шăлĕсене çăлса хăварасшăн. Пин те тăхăр çĕр хĕрĕх пиллĕкмĕш çул. эслă трагедин юлашки çулĕ, гитлерла Германин юлашки çулĕ пулĕ.

Венгрире пĕтĕм вăйпа хирĕç тăрса çапăçса, Бельгире контратакăсем туса, васкаса пухнă çĕнĕ дивизисене çапăçăва кĕртсе ярса, мĕн çине шанаççĕ-ха нимĕçсем? Фриц темле анкă-минкĕ пулсан та, халĕ вăл çĕнтерĕве шанма пултараймасть. Çапах та нимĕç шутлать: судьясене суд алĕкĕ умĕнче чарсан, вĕсем сапаланса пĕтĕç, тет. Айванла шухăш! Мĕн туйса курнине эпир манса кайиччен юханшыв хирĕçле юхма пуçлĕ, ваттисем, çамрăкланса, ачасем пулса тăрĕç. Белоруссири кĕле курнă çын—вут хыптаракансене те тупĕ. Бобий Яра курнă çын—ача вĕлерекенсене те шыраса тупĕ. Эпир ытла нумай тӳсрĕмĕр, эпир çавăнпа çурма çулта чарăнма пултараймастпăр, пирĕн Берлинра пулмаллах!

Ӳкерчĕк çинчи пурнăç лайăх та яка курăнать. Пирĕн çашниннех уйрăм пурнăç, ăшă та тир пек çăмлă пурнăç пулнă, кашни çыннăн хăйне уйрăм йăлисем, хăйне уйрăм çыхăнăвĕсем, хăйне уйрăм юрату пулнă. Куçăмăрсене хупса аса илер-ха: урам, çуртсем, çĕнĕ çул каçĕнче чӳречесем çапçутахчĕ, чӳречерен пăхсан, тĕрлĕ яраласем курма пулатчĕ: елка тавра ачасем çавăрăнатчĕç, куç кĕски патĕнче пике ларатчĕ, сĕтел тавра çемье ларатчĕ, ватă ĕмĕтлевçĕ кĕнеке вулатчĕ. Киев çурчĕсем Иркутск çурчĕсенчен уйрăмрахчĕ, Полтавăра Вологдăри пек мар, урăхларах юрлатчĕç, пикесем те унта урăхларахчĕ. Çакă вăл пурнăç пулнă. Ача хĕрлĕ шатрапа чирлесен, амăшĕ çĕрĕпе çывăрмасăр ачи патĕнче ларатчĕ. Чи лайăх çынсем вилĕмпе кĕрешетчĕç. Пурте эпир çĕнĕрен тунă çуртсем çине пăхса, лартса ӳстернĕ йывăççене курса савăнаттăмăр... Пурне те аса илмелле. Амăшĕ хăйĕн вилнĕ ывăлне манма пултарать-и? Çухатнă телей ĕшшине салтак манма пултарать-и? Смоленск çыннисем хăйсен çунтарса янă хули çинчен манма пултарĕç-и? Манăпăр-и эпир мĕн пулса иртнине? Çук! Эпир манса каяссине нимĕçсем ахалех ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем пирĕн пата хурахла килсе кĕчĕç. Çав вырсарникуна, çав çуллахи ире эпир Берлинра аса илĕпĕр. Хĕрĕх пиллĕкмĕш çул хĕрĕх пĕрремĕшне тивĕçлĕ ответ парĕ.

Пирĕн ачасем çакăн пек инкек ан курччăр тесе, эпир фашистла Германие пĕтерсе хурасшăн. Пурнăçа чĕререн юратнипе эпир Майданекра çынсене çунтаракансене çĕр çинче хăварма пултараймастпăр. Захватчиксене каçарма пултараймастпăр эпир, мĕншĕн тесен мирлĕ пурнăçа çав тери хаклатпăр. Эпир вĕсен тискер чĕрнисемпе шăлĕсене пĕтерме каятпăр. Нимĕç асамăçне кăшăла хупсан тин лăпланăпăр эпир. Берлина çитсен тин çырлахăпăр эпир.

Савăнма ирттерех-ха. Малта хаяр çапăçусем пулмалла. Россия çăварне хупнă, куçĕсем унăн тип-типех, шӳт тума унăн вăхăт çук. Çав усалсене пĕтермесĕр хĕçпăшала пăрахмăпăр тесе, вилнĕ туссем умĕнче, ачасем умĕнче тупа турăмăр эпир. Этем чĕри çаплалла ĕнтĕ вăл: вĕçне çитес умĕн юлашки самантра ăна пушшех йывăртарах. Çĕр çухрăм утма та пулать, анчах чи йывăрри—юлашки çĕр утăма тăвасси. Пирĕн умра йывăрлăхсем те пулĕç. Çитес çĕре çитетпĕрех эпир. Çитес çулта нимĕçсене пĕтеретпĕрех эпир. Хуйхă çине инçерен пăхсан, сана çывăх çынсем кĕтмеççĕ пулсан, тăхтама та пулать. Эпир тăваттăмĕш çул вăрçатпăр. Пирĕн салтаксене ачасем те, пикесем те, кил-çуртсем те кĕтсе ывăнчĕç. Тăван çĕршыв та вĕсене кĕтсе ывăнчĕ: вăл пурăнасшăн, ӳсесшĕн, шухăшласшăн, савăнасшăн, пиншер çутăсемпе çуталасшăн. Çĕнĕ çула кĕрсе пĕрне-пĕри уççăнах çапла калăпăр: эпир чăн-чăн чĕрĕ пурнăçшăн тунсăхлатпăр, çавăн пирки те 1945 çулта нимĕçе пирĕн аркатса тăкмаллах.

Ĕлĕк калатчĕç: çĕнĕ çулпа, çĕнĕ телейпе тав тăватпăр, тетчĕç. Ун чухне эпир телей мĕн иккенне те пĕлеймен пулĕ. Темиçе çул хушши окопсенче, блиндажсенче, землянкăсенче, пылчăкра, юр çинче, юн ăшĕнче выртни, тăвансене, ывăлсене, туссене çухатни пире «телей» текен сăмаха ăнланса илме пулăшрĕ. Халĕ эпир: телей пулать, этемĕн пысăк телейĕ пулать, тетпĕр, тăшмана çĕнтерсе тавăрăннă салтак хăй арăмне ыталĕ, ачисене аллиле, ачаранпах пĕлекен çуртйĕрне, йывăç куракă, тăванĕсене курĕ. Хуласем çутăлса кайсан, хуйхăллă арăмсем: «Çыру çук-и?» тесе ыйтма пăрахсан, çуллахи вăрăм кунсенче хумханса ларакан тырпула курсан, телей, чăн-чăн пысăк телей çитĕ. Телей пулĕ, çĕнтерӳ телейĕ çитĕ, çавăнпа та эпир: çĕнĕ çулпа, çĕнтерӳ çулĕпе тав тăватпăр, тесе калатпăр.

Илья ЭРЕНБУРГ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛ...

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04295 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59Х42 ... Тираж 16.000 экз.